28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРЬ 9 ВЫРСАРНИКУН 175(6926) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕпе тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Кĕрхи çĕртмешĕн кĕрешни— тырпул тухăçлăхĕшĕн кĕрешни

Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă пирĕн Тăван çĕршыв тата пирĕн союзниксем çĕнтернипе вĕçленнĕ ятпа Сталин юлташ радио тăрăх чĕнсе каланине колхозниксемпе колхозницăсем пысăк савăнăçпа тата хавхаланса кĕтсе илчĕç. Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту хăватлăн сарăлса кайрĕ. Халĕ кашни ĕççынни çĕнĕ çĕнтерӳсем туса Тăван çĕршывăн вăй-хăватне ӳстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Тырпул пухса кĕртес, кĕрхи тырăсене акас тата государствăна тырă парас ĕçе хĕрӳллĕн туса пынипе пĕрлех, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем килес çулхи тырпул тухăçлăхĕшĕн те анлă кĕрешӳ пуçласа ячĕç. Вăрнар районĕ, яланхи пекех, ку ĕçре те малта пырать. Çапла паянхи кун тĕлне Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз 92 гектар ытла сухаланă. Çĕньял Хапăсри Сталин ячĕпе тăракан, «11 лет Чувашии», Чапаев, Мамалайри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те 20—30 гектар кĕрхи çĕртме тунă. Районри пур колхозсем те çĕртме тума тытăннă. Сĕнтĕр, Советски, Елчĕк, Шупашкар, Ишлей, Красноармейски районсенче те хĕрсех çĕртме тăваççĕ. Малта пыракан нумай колхозсем юлашки пилĕккунлăхра çĕртме тăвас ĕçе ытти ĕçсемпе пĕрлех туса пыраççĕ. Вăрнар, Советски, Елчĕк, Красноармейски, Çĕрпӳ тата ытти районсенчи колхозсем çулран-çул вăйлă тырпул туса илни чăн малтанах çĕртме сухине вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса хăварнинчен килет. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз иртнĕ çул кăçал тулă акмалли 360 гектар çĕре вăхăтра тата лайăх сухаласа хăварнă. Кăçал çак лаптăкран кашни гектартан вăтам шутпа 15 центнер тулă пухса илнĕ. Çак районри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра та çĕртме тунă вырăнсенче тулă, сĕлĕ тата ытти тырăсем те вăйлă пулнă. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти районсенчи колхозсенче те пур. Çĕртме тунин усси пур енчен те паха. Вăл уйхирте çумкурăкне пĕтермелли, тăпрара ытларах нӳрлĕх тытса хăвармалли чи шанчăклă мероприятисенчен пĕри пулса тăрать. Кĕрхи çĕртме тунипе пула тăпрара ӳсентăрана кирлĕ япаласем нумайланаççĕ, çапла вара тырă тухăçĕ пысăкланмалли условисем ӳсеççĕ. Унсăр пуçне, çĕртме сухине вăхăтра туни çуракине иртерех тата лайăхрах иртерме май парать. Кăçал Вăрнар, Калинино, Красноармейски, Çĕрпӳ районĕсенчи колхозсем, 1944 çулта кĕрхи çĕртме сухине ытти районсенчи колхозсенчен лайăхрах туса иртернĕскерсем, 1945 çулта çуракине чылай кĕскерех вăхăтра иртерме тата ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай ӳстерме пултарчĕç. Çуракине иртерех туса иртерсен, вăйлă тырпул туса илес шанчăк та пысăкланать.

Анчах республикăри хăшпĕр районсенче 1944 çулта кĕрхи çĕртме сухине тивĕçлипе хакламарĕç, кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана тултараймарĕç. Çавăнпа вара вĕсен кăçал çураки вăхăтĕнче пысăк чăрмавсем пулчĕç, тырпул тухăçĕ те пĕчĕкрех пулчĕ. Первомайски, Кувакино, Пăрачкав, Йĕпреç районĕсенчи колхозсем иртнĕ çул кĕрхи çĕртме тăвассипе юлса пычĕç тата кĕрхи çĕртме тумалли плана тултараймарĕç. Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз çултан çул начар тухăçлăхлă тырпул туса илет. Çакăн сăлтавĕсенчен пĕри вăл—кĕрхи çĕртме вăхăтра туманни пулса тăрать.

Сентябрь уйăхĕ—кĕрхи çĕртме тумалли чи паха уйăх. Халĕ хĕрӳллĕ ĕçсен вăхăчĕ. Пур ĕçе те вăхăтра тата лайăх тăвас тесен, пĕтĕм туртăм тата ĕç вăйне колхоз ĕçне тума явăçтармалла. Уйрăмăнах туртăм вăйне пĕлсе ĕçе вырнаçтарни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кашни лашапа, кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ выльăхпа кĕрхи çĕртме тунă çĕрте туллин усă курмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа кĕрхи çĕртме тума тытăнма хушрĕç. Анчах та сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне республикăри 7 районри колхозсенче çĕртме тума тытăнман. Вĕсен шутĕнче Йĕпреç, Комсомольски, Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Тăвай тата ытти районсем те пур. Кĕрхи çĕртме тума тытăннă Улатăр, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Октябрьски, Чурачăк тата Шăхасан районĕсем те сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне плана пĕр процента яхăн кăна пурнăçланă. Кĕрхи çĕртме ытларах туни—тырпул ытларах пухса илессишĕн кĕрешни пулать. Кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлеме яланлăхах кирлĕ таран лашасем уйăрмалла. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе çăмăллатас тесе, сухаламалли пур участоксене те хăмăлтан тата çумкурăкĕсенчен тасатмалла.

Иртнĕ çул çамрăк сухаçăсемпе трактористсем кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ăнăçлă ĕçлерĕç. Советски районра кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре 113 комсомолец ĕçленĕ. Ишлей районĕнчи «Коммунист» колхозра кĕрхи çĕртме тума ятарласа звено тунă. Звенори 3 комсомолец 60 гектар ытла сухаланă. Елчĕк МТС-чи Струнков юлташ ертсе пыракан трактор бригади 120 гектар вырăнне 254 гектар кĕрхи çĕртме тунă. ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе кăçал та çамрăксене анлăн явăçтарас тесе, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен пĕтĕм республикăри ăмăртăвĕ пуçланни çинчен пĕлтерчĕç. Çак ăмăртăва колхозри кашни çамрăкăн, кашни комсомолецăн хутшăнмалла. Комсомолецсемпе çамрăксен кĕрхи çĕртме тунă çĕрте майракаллă шултра выльăхсемпе ытларах усă курма тăрăшмалла. Комсомольски, Шăмăршă, Елчĕк районĕсенчи колхозсем кăçал кĕраки вăхăтĕнче вăкăр-ĕнесемпе анлăн усă курчĕç. Кĕраккинче ĕçленĕ мĕнпур вăкăр-ĕнесемпе кĕрхи çĕртме тунă çĕрте усă курмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ МТС директорĕсене тырпул пухса кĕртес ĕçре усă курман тракторсене пĕтĕмпех кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕре яма хушаççĕ. Çак кăтартăва пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла.

Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте нормăна иртерсе ĕçлесен, иртерсе сухаланă кашни гектаршăн МТС тракторисчĕсене ĕçкунĕсем 1,5 хут ӳстерсе çыраççĕ. Графикра кăтартнă сроксенче çĕртме туса пĕтернĕ колхозниксене 10 ĕçкунĕ чухлĕ премни тата сезонри нормăран иртерсе сухаланă кашни гектаршăн ĕçкунĕсем 2 хут ӳстерсе çыраççĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хутшăннă колхозниксемпе трактористсене хавхалантарса ĕçлеме кăçал пур условисем те çителĕклĕ.

Кĕрхи çĕртме тунă чухне пахалăх çине уйрăмăнах тимлĕн пăхмалла. Агрономсем, колхозсенчи пахалăх инспекторĕсем тата колхоз председателĕсемпе бригадирсем кĕрхи çĕртме пахалăхне яланах тĕрĕслесе тăмалла.

Колхозсенче вăрлăх участокĕ валли уйăрнă лаптăксемпе паха культурăсем акакан вырăнсене обязательнăй йĕркепе сентябрь уйăхĕнче сухаласа пĕтермелле.

Колхозсĕнчĕ халĕ Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Колхозниксемпе трактористсен çак ăмăртăва хутшăнса çĕртме тумалли плана сентябрь уйăхĕнче вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

5 сентябрь — Тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăх — 15 сентябрь

Малта пыракансен опычĕпе юлса пыракансене паллаштармалла

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Пумай колхозсенче кăçал тырпул пухса кĕртес ĕç лайăх пырать. Районри 10 колхоз вунăкунлăх пуçланиă тĕле тĕштырăсене вырса пĕтернĕ. Колхозсенчи агитаторсем ВКП(б) Обком бюровĕ тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăх иртересси çинчен йышăннă постановленине ăнлантарса параççĕ. ВКП(б) ячĕпе тăракан колхозра кашни звенорах касхине канашлусем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем пур тĕрлĕ тырра сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтерме, капана хывма, 80 процентран кая мар çапма йышăнчĕç.

Вунăкунлăхăн малтанхи кунĕнче кунĕпе тенĕ пекех çумăр çурĕ. Колхозри ĕç пӳрĕ-пĕр чарăнмарĕ. Колхозниксем витнĕ итемре авăн çапрĕç, тырра сеялкăпа сăвăрса тасатрĕç.

«Коминтерн» колхоз (председателĕ Кузнецов юлташ) пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши тырăсене вырса пĕтернĕ. Авăн çапмалли тата капан хывмалли графика ытлашшипех тултарса пырать. Кунта халĕ кантăр татма та тытăннă.

«Волна» тата «Красное Сормово» колхозсенче 2-шер гектар табак касса пухнă.

«Крестьянин», «Заветы Ильича», «Родина» колхозсем те тĕштырăсене вырса пĕтерчĕç. Капана хывас, авăн çапас ĕçсем кунта ăнăçлă пыраççĕ. Çак колхозсем государствăна тырă памалли графика иртерсе тултараççĕ.

Анчах та хăшпĕр колхозсенче ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменнине те курма пулать-ха. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра тырă вырасси çителĕксĕр пырать. Кунта план тăрăх кунне 12-шер гектар вырмалла пулсан, 5 кун хушшинче те 33 гектар кăна вырнă. Колхозниксен куллен тунă ĕçне шута илсе пымаççĕ, çавна пула вара ăмăртса ĕçленин итогĕсем паллă мар. Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ А. Иженеева юлташ колхозниксене хаçат вуласа парассине, калаçусем иртерессине хăйĕн ĕçĕ тесе шутламасть. Стена хаçачĕ тырă вырма тухнăранпа та пĕр номер те кăларман. «Боевой листоксем» те пĕрер номер кăна кăларнă. Социализмлă ăмăрту организацилесси çинчен колхоз правленийĕ, партипе комсомол организацийĕсен пухăвĕнче те сӳтсе-явнă. Кунта лайăх ĕçлекенсен опытне сарса пырассишĕн тăрăшмаççĕ. Колхозница Матрена Зорина хăй ваттине пăхмасăрах шурăмпуçĕпе ĕçе тухса тĕттĕм пуличченех тырă вырать, куллен хи нормăна иртерсе тултарать. Ун пек колхозницăсем татах та пур, анчах вĕсене колхозра палăртмаççĕ. Колхоз председателĕ Е. Медведев тырпул пухса кĕртессине кирлĕ пек йĕркелемен.

«Герой», Киров, Молотов, Чкалов ячĕсемпе тăракан колхозсенче те тырă вырас ĕç çителĕксĕр пырать. Çак колхозсем çуртырисене çурри яхăн кăна вырнă. Капан хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас графика тултарса пымаççĕ. Тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăхра кашни колхозăн тырă вырас ĕçе пĕтĕмпех вĕçлессишĕн тăрăшмалла.

П. ТИХОНОВ.

Республикăри МТС-сенче

Комбайнер Семенов хăйĕн планне 200 процент ытла тултарнă

ЙĔПРЕÇ, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Йĕпреç МТС-ĕ комбайнсемпе тырă вырса пухмалли плана 80 процент тултарнă. Çак МТС-ри паллă комбайнер Семенов юлташ «Коммунар» комбайнпа 225 гектар вырса пухнă. А. Иванов комбайнер 140 гектар, А. Сергеев комбайнер 149 гектар вырса хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарнă.

Анчах та МТС-ра начар ĕçлекен комбайнерсем те пур. Вĕсенчен Макаровпа Морковкин комбайнерсене уйрăмăнах палăртмалла. Морковкин комбайнер горючи хакĕ чухлĕ те выраймасть тата çав вăхăтрах ытла та тирпейсĕр вырать.

С. ШАДИН.

Ăмăрту хĕрӳллĕн пырать

Красноармейски МТС-ĕнчи П. Можаров комбайнер хăйĕн планне 115 процент, А. Мокеев комбайнер 112 процент, А. Мефодьев комбайнер 100 процент тултарнă.

Комбайнерсемпе трактористсем, Сталин юлташ пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вĕçленни çинчен радио тăрăх тухса каланине ĕçпе ответлес тесе, комбайнсемпе тырă вырса пухмалли плана сентябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарма обязательство илнĕ. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн халĕ МТС-ра социализмлă ăмăрту хĕрӳллĕн пырать.

Петухов çумăр чарăнасса кĕтет

Çĕмĕрле МТС-ĕ тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана пурĕ те 75 процента яхăн кăна тултарнă. Газогенераторлă тракторсемпе ĕçлемелли плана вара 42 процент кăна пурнăçланă. МТС комбайнсемпе кăçал колхозсене 1000 гектар пухса памалла, паянхи кун тĕлне пурĕ те 470 гектар кăна вырса пухнă. Сентябрĕн 1-мĕшĕпе 7-мĕшĕ хушшинче 9 комбайнпа пурĕ те 47 гектар кăна вырнă.

Комбайнсем мĕншĕн çав тери начар ĕçлеççĕ, тесе ыйтсан, МТС директорĕ Петухов юлташ: тăтăшах çумăр çăвать, ĕçлеме май çук, тесе ответлет. Çав вăхăтрах МТС-ри И. Михайлов, Чекменев, Шукин комбайнерсем, çумăра пăхмасăрах, комбайнсемпе вырмалли хăйсен планне чылай иртерсе тултарнă.

Халĕ çумăр çине йăвантарса ларни мар, государство заданийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешни кирлĕ.

В. АКЧЕЛЬ.

МТС начар ĕçлет

СĔНТĔРВĂРРИ, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Район тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе малта пырать. Тĕштырăсене вырса пĕтермелли вунăкунлăхра кунта мĕнпур колхозсем тырă вырас ĕçе вĕçлеççĕ.

Анчах та районри МТС вара ытла та начар ĕçлет. Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тракторсемпе çулталăкра ĕçлемелли плана пурĕ те 74 процент кăна тултарнă. Тракторсем час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ. 7-мĕш трактор бригадинчи 17-мĕш номерлĕ СТЗ маркăллă трактор 3 уйăх хушшинче пĕр гектар та сухаламан. МТС старши механикĕ Леонтьев юлташ çак трактора виçĕ уйăхра 4 хут юсанă, анчах трактор çаплах юсавсăр. Çакăн пек тракторсем вара кунта пĕрре кăна мар.

Тырă вырса пухас ĕç районра хĕрӳллĕн пырать. МТС комбайнсемпе вырса пухмалли плана пурĕ те 68 процент кăна тултарнă. Комбайнерсемпе трактористсем ĕç дисциплинине яланах пăсаççĕ, вĕсем хушшинче агитацие массăллă ĕçе пачах туса пымаççĕ. Львов юлташ бригадир пулса ĕçлекен 5-мĕш трактор бригадинче 3 уйăх хушшинче пĕр «боевой листок» та кăларман. Калаçусем тата производствăллă канашлусем ытла та сайра пулаççĕ. Кам мĕнле ĕçленине кирлĕ пек шута илсе пымаççĕ, социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе сарса яман.

МТС-ра лайăх ĕçлекен трактористсем пур. Сăмахран, 3-мĕш трактор бригади хăйĕн планне тултарнă. Сергушенков тата Брызгалов трактористсем ĕçре чаплă тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен бригадинче ĕçлекен Шашков юлташ плана иртерсе тултарнă, 600 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çак тракторист 2-мĕш çул ĕнтĕ хăйĕн планне ытлашшипех тултарса пырать. Анчах МТС-ра малта пыракансене хисеплемеççĕ, вĕсен опычĕпе ытти трактористсене паллаштармаççĕ.

Районри партипе совет организацийĕсем те МТС-а кирлĕ пек пулăшу памаççĕ-ха.

И. САЛАМБЕК.

Тырпул пухса кĕртесси пысăк çĕкленӳпе пырать

КАЛИНИНО, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă пĕтни çинчен Сталин юлташ радиопа тухса каланине районри колхозниксемпе колхозницăсем савăнса кĕтсе илчĕç. Тырпул пухса кĕртес ĕçре ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Вунăкунлăха хутшăнса, районри «Çутталла», «Красная звезда», «Комсомол», «Большевик», «Правда», «Броневик» тата ытти 15 колхоз тĕштырăсене вырса пĕтерчĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксем сентябрĕн 9-мĕшĕнче воскресник туса иртереççĕ. Вĕсем 2.500 центнер тырă леçме йышăннă. Тырпул вырса пухасси тата государствăна тырă леçесси пысăк çĕкленӳпе пырать.

П. НИКИТИН, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

НКПС-ăн Канашри вагонсем юсакан заводĕнчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ 172-мĕш номерте).

12. Василий Пантелеевич **Колокольнева**—вагонсем юсакан цехăн начальникне.
13. Аркадий Иванович **Кабанова** — юсавлă строительство цехĕн кăмака тăваканне.
14. Иван Максимович **Лукина**—инструмент цехĕн мастерне.
15. Борис Иванович **Лисицына**—заводăн начальникĕн помощникне.
16. Иван Максимович **Максимова** — юсавлă механически цехăн котельщикне.
17. Григорий Андреевич **Маркова** — главнăй энергетик отделĕн старши инженерне.
18. Николай Васильевич **Нагаева**—Канашри 2-мĕш номерлĕ чугун çул училищин мастерне.
19. Евгений Яковлевич **Овчинникова**—йывăç каскалакан цехăн начальникĕн заместительне.
20. Анатолий Пантелеевич **Орлова** — юсавпа утилизаци цехĕн электросварщикне.
21. Иван Дмитриевич **Петрова**—рессорăпа пружина цехĕн рессорщикне.
22. Александр Прокопьевич **Прокопьева**—план отделĕн начальникĕн заместительне.
23. Арсений Кириллович **Сорокăна** — производство отделĕн начальникне.
24. Михаил Иванович **Стальнова** — юсавпа механически цехăн слесарьне.
25. Михаил Иванович **Сусанова**—техснаб начальникĕн заместительне.
26. Николай Степанович **Степанова** — вагонсем юсакан цехăн столярне.
27. Михаил Михайлович **Толстова** — юсавпа утилизаци цехĕн мастерне.
28. Яким Тимофеевич **Тимофеева** — урапа цехĕн мастерне.
29. Павел Павлович **Часова**—электроремонтнăй цехăн мастерне.
30. Степан Ильич **Шаргаева**—юсавпа утилизаци цехĕн тимĕрçине.
31. Григорий Викторович **Шуплигина**—опис бюровĕн начальникне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ.

Чи лайăх пионерсем Артека кайрĕç

Çак кунсенче республикăри чи лайăх пионерсем, пурĕ 10 ача, Пĕтĕм Союзри пионерсен санаторине—Артека тухса кайрĕç. Вĕсенчен Канашри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулти Ала Лазарева, Улатăрти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулти Юрий Лычагин, Шупашкарти арçын ачасен 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи Вадим Соколов, хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи Инеса Арсентьева, хĕрачасен 6-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи Людмила Дмитриева, хĕрачасен 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи Роза Бартасова вĕренекенсем иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пур предметпа та «пятерка» паллăсемпе вĕреннĕ.

Вĕсем санаторире 40 кун хушши канмалла. Ачасене ăсатма Канаша вĕсен ашшĕ-амăшĕсем, ВЛКСМ Обкомĕпе хула комитечĕн представителĕсем пынă.

А. АТЛАСОВ.

Вĕренӳ çулĕ организованно пуçланнă

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне организованно пуçларĕç. Ишекри вăтам шкулти учительсем вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн пĕр кун малтан пур ачасен ашшĕ-амăшĕсем патне те çитнĕ, вĕсемпе калаçнă. Çавна пула кунта сентябрĕн 1-мĕшĕнче пĕр ача та шкула пымасăр юлман. 1-мĕш класри ачасене чылайĕшне аслăрах класри вĕренекенсемпе ашшĕ-амăшĕсем илсе пынă. 1-мĕш класа 27 ача çӳремелле пулсан, çак кун вĕсем шкула пурте пынă.

Шкул вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Шкул çуртне лозунгсем, плакатсем тата çулпуçсен сăнĕсене çакса илемлетнĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа шкулта ятарласа стена хаçачĕ кăларнă. Шкул çуртне юсанă, урайĕсене сăрланă. Учебниксемпе вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене çителĕклĕ таран илсе хатĕрленĕ. Физкультура площадки туса йĕркеленĕ.

Уйăхри плана ытлашшипех тултарнă

Шупашкарти «Металлист» промартель (председателĕ Тимошин юлташ) август уйăхĕнчи плана 128 процент тултарнă. Уйрăмăнах Шурдикова, Козлова тата Шалаева формовщицăсем лайăх ĕçленĕ. Вĕсем нормăпа пăхнинчен 1,5 хут тухăçлăрах ĕçленĕ.

М. В.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче П. Гроза господинпа Г. Татареску господин ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче Кремльте Румыни Премьер-министрĕ П. Гроза господинпа Вице-премьер министр тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Г. Татареску господин ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура П. Гроза господинпа Г. Татареску господинсемсĕр пуçне çаксем пулнă: Çулйĕрсен тата Обществăллă ĕçсен Министрĕ Г. Георгиу Деж господин, Çутĕç Министрĕ Ш. Войтек господин, Румыни Совет Союзĕнчи Посолĕ И. Йордан господин, Перемири условийĕсене пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси Председателĕ М. Гельмеджану господин, М. Солаколу, Б. Шкиспу, М. Бабеш господинсем.

Совет Союзĕнчен çаксем пулнă: В. М. Молотов, А. И. Микоян, Л. М. Каганович, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Н. А. Вознесенский, А. М. Косыгин, Н. А. Булганин, И. В. Ковалев, В. Н. Меркулов, А. Я. Вышинский, А. Г. Деканозов, Совет Союзĕн Румынири Посолĕ С. И. Кавтарадзе, А. Д. Крутиков, генерал-полковник И. З. Сусайков, А. П. Павлов, Н. Г. Пальгунов, А. А. Лаврищев, В. С. Кеменов, Б. Ф. Подцероб, Н. Н. Янкевич.

Апатлану ăшшăн та туслăн пулса иртнĕ.

Совет Союзĕн Геройĕ генерал-полковник А. Н. Боголюбов Шупашкарта

Шупашкара çак кунсенче пирĕн мухтавлă земляк Совет Союзĕн Геройĕ генерал-полковник А. Н. Боголюбов килчĕ.

Александр Николаевич Шупашкарта республикăри партипе совет организацийĕсен руководителĕсемпе тĕл пулчĕ, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра пулчĕ, çавăн пекех тата ВЦСПС-ăн Ильинкăри канмалли çуртне кайса килчĕ.

Хăйĕн тăван хулинче А. Н. Боголюбов юлташ темиçе кун хушши пулать.

Инвалидсен 6 уйăхлăх курсĕ

Отечественнăй вăрçă инвалидсене ĕçе вĕрентес тĕлĕшпе Наркомсобес çумĕнче бухгалтерсем хатĕрлекен 6 уйăхлăх курс уçăлнă. Курсра пурĕ 29 инвалид вĕренет. Вĕсене пурне те общежитие вырнаçтарнă, кунне 3 хутчен апат çитереççĕ, тăхăнмалли тумтир панă.

Курсантсем малтанхи кунсенчех пысăк тимлĕхпе вĕренме тытăнчĕç.

С. ГРИГОРЬЕВ.

Совет Союзĕ тăрăх

Ӳкерчĕк çинче: виçĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ летчик-истребитель **И. Кожедуб** (сулахайри) Социализмлă Ĕç Геройĕ **С. А. Лавочкин** патĕнче хăнара.

А. ЛЕСС фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ДАРЬЯ ГАРМАШ БРИГАДИ ТĂВАТĂ ÇУЛТАЛĂК НОРМИНЕ ТУЛТАРНĂ

РЯЗАНЬ, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Сталин юлташ халăха чĕнсе калани Рязань облаçĕнчи трактористсене питĕ хавхалантарнă. Колхоз хирĕсенче трактористсен ăмăртăвĕ анлăн сарăлса кайнă. Малта, унччен пекех, Рыбновски МТС-ри Дарья Гармашăн бригади пырать. Çĕнтерӳ ячĕпе сталинла вахтăна тăрса, вăл тăватă çулталăк нормине тултарнă, 15 вăйлă кашни тракторпа 1.600 гектар сухаланă. Бригада 9 тонна ытла горючи перекетлесе хăварнă.

Рыбновски МТС-ри И. Кондрашин бригади, çавăн пекех тата Старожиловски МТС-ри Т. Анипко бригади виçĕ çулталăк нормине ытла тултарнă.

Пĕтĕм облаçĕпе мала тухассишĕн мĕн пурĕ 85 трактор бригади ăмăртса ĕçлет. Вĕсем пурте 15 вăйлă кашни трактор пуçне 500-шер гектар ытла сухаланă.

Ӳкерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ **М. Щербаченко**. Вăрçăччен вăл Харьков облаçĕнчи колхозра ĕçленĕ.

А. ЛЕСС фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ДНЕПРПА БУГ КАНАЛĔН МАЛТАНХИ ПАЙНЕ ЮСАСА ĔÇЕ ЯНĂ

КИЕВ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Днепрпа Буг каналĕн Пинскпа Брест хушшинчи пайне юсаса ĕçе янă. Çак юсаса ĕçе янă пай 200 километра яхăн, вăл Полесьепе Днепрпа çыхăнтарать. Канал çинчи пур механизмсем те лайăх ĕçлеççĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем ишĕлтерсе хăварнă каналăн тепĕр пайне те юсаса ĕçе яма хатĕрленеççĕ.

КАМЧАТКĂПА КОМСОМОЛЬСК ХУШШИНЧЕ КАРАПСЕМ ÇӲРЕМЕ ПУÇЛАНĂ

АМУР ÇИНЧИ КОМСОМОЛЬСК, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 6-мĕшĕнче Амур çинчи Комсомольск хулипе Камчаткăран тинĕсре çӳрекен буксир судни çитнĕ. Ку вăл—Камчаткăран Комсомольска килнĕ пĕрремĕш кимĕ. Çапла ĕнтĕ Камчаткăпа Комсомольск хушшинчи тинĕс çулĕ уçăлнă. Кимĕ Охотски тинĕс урлă вăйлă шторм вăхăтĕнче каçнă.

МОЛОТИЛКА МАШИНИСЧĔН ЯЦЕМИРСКИН ÇĔНĔ РЕКОРЧĔ

ПРОСКУРОВ, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Каменец-Подольск облаçĕнчи Вахновецки МТС машинисчĕ Яцемирский нумаях та пулмасть 18 тонна тырă çапса кăларас вырăнне 16 сехет хушшинче 71 тонна тырă çапса кăларнă. Иртнĕ кунсенче вăл татах çĕнĕ рекорд тунă — 76 тонна тырă çапса кăларса нормăна 4,5 хут иртерсе тултарнă.

Пĕр кун хушшинче молотилка витĕр 46.200 кĕлте çапăнса тухнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти членĕсен пухăвĕсене ирттересси çинчен

Парти членĕсен пухăвĕ—партин пуçламĕш организацин чи аслă органĕ пулса тăрать. Пухура организацин куллenхи чи кирлĕ ĕçĕсемпе задачисене сÿтсе-явса тивĕçлĕ решенисем йышăнаççĕ. Коммунистсене поручени парса, вăл поручени-сене кам мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăраççĕ.

Партин Октябрьски районри организацийĕ партин 21 пуçламĕш организацийĕпе 3 кандидатсен группине пĕрлештерсе тăрать. Юлашки вăхăтра предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи пуçламĕш организацисем парти членĕсен пухăвĕсене ирттерес ĕçе чылай лайăхлатрĕç. Пĕтĕм партиллĕ-политикăллă ĕçе куллен-хи ялхуçалăх ĕçĕсемпе таччăн çыхăнтарса туса пыраççĕ. ВКП(б) райкомĕ партин пуçламĕш организацийĕсен ĕçĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăрса, ĕçри çитменлĕх-сене çийĕнчех пĕтерме пулăшать.

Партин райĕнри пуçламĕш организацийĕсем çак тарана çитсе пурĕ 52 пуху туса ирттернĕ. Çав пухусенче 309 ыйту сÿтсе-явнă. Уйрăмăнах пуху ирттерес ĕçе Кивтутайкассинчи, Кутемерти, Шĕнерпуçĕнчи тата Туçари пуçламĕш организацисем лайăх йĕркеленĕ. Ку организацисем паянхи кун тĕлне кашниех 11—13-шер пуху туса ирттернĕ. Каранъялĕнчи «Труд» промартель çумĕнчи партин пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ И. Мокеев) 15 пуху ирттернĕ. Асăннă пуçламĕш организацисенче пуху пулассн çинчен коммунистсене 2—3 кун малтан пĕлтереççĕ. Пĕтĕм ĕçе партин хупă пухăвĕсенче çирĕплетнĕ план тăрăх туса пыраççĕ. Кам, хăçан тата мĕнле поручени-сем пурнăçламаллине пухусенче кăтартса хăвараççĕ. Пĕр-пĕр кампаниллĕ ĕç ирттерес пулсан, ун çинчен малтан парти пухăвĕсенче сÿтсе-яваççĕ. Кайран вара çав ыйтăва колхоз правленинче сÿтсе-явса, колхозниксем хушшинче ăнлантарса параççĕ.

Анчах та парти пухăвĕсене ирттерес ĕç пур çĕрте те кирлĕ вырăнта теме çук. Ку ĕçре çитменлĕхсем те пур.

Партин Çичĕпÿртри пуçламĕш организацийĕ 2—3 уйăх хушши парти пухăвĕсем туса ирттермен. Çавна пула ку организацире дисциплина та япăхса кайнă. Уйрăм коммунистсем хуçалăхпа политикăллă кампанисене хутшăнмаççĕ, парти пухăвĕсене сăлтавсăрах çÿремеççĕ, пухури ыйтусене сÿтсе-явнă чух тухса калаçмаççĕ. Кунта самокритикăпа критика та тивĕçлĕ вырăнта мар.

Халăх судĕнчи, çĕрĕç пайĕнчи тата Шупашкар-Ĕсмĕл ялĕнчи партин пуçламĕш организацийĕсенче чылай ĕçе коммунистсем хăйсен вăйĕпе кăна туса пыраççĕ. Ĕç тавра актива явăçтарман, уçă пухусем вуçех те пулса иртмеççĕ. Коммунистсем актив хушшинче ытла та сахал пулаççĕ, вĕсене кулленхи ĕçре вĕрентсе, пулăшса пыни çук. Çавна пула кунта парти йышĕ те ÿсмест.

Кĕчкейри тата Наратчаккинчи партин пуçламĕш организацийĕсем вара комсомол организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ кунта союзра тăман çамрăксем хушшинче нимĕнле ĕç те курăнмасть.

Ник. АНДРЕЕВ.
(Хамăр корр.).

Коммунистсемпе комсомолецсен ĕçри паха тĕслĕхĕсем

Вăрнарти машинно-тракторнăй станцинчи 4-мĕш номерлĕ трактор бригади пĕтĕмпех коммунистсемпе комсомолецсенчен тăрать. Бригадăна орденоносец П. Тойдеряков юлташ ертсе пырать. Иртнĕ çулта та малта пулнă бригада кăçал хăй умне тата пысăкрах задача лартнă.

— Пирĕн начар ĕçлеме тата кая юлса пыма нимĕнле сăлтав та çук. Эпир малта пыраканосем кăна пулмалла, — тенĕ бригадир П. Тойдеряков юлташ трактористсемпе трактористкăсем умĕнче. Çавăн пек шухăш-кăмăлпа ĕçлет те ĕнтĕ бригада.

Трактор бригади çулталăкри план тăрăх, авăн çапнине шута илмесĕр, 768 гектар чухлĕ ĕçлемелле. Çак плана бригада июнь уйăхĕн пуçламăшĕнчех ирттерсе тултарчĕ.

4-мĕш номерлĕ трактор бригади Хирпуçĕнчи «Победа» тата Рунгари «Малый Цивиль» колхозсенче ĕçлет. Бригада 2000 гектар ытла сухаланă, урăхла каласан тракторпа ĕçлемелли çулталăкри плана 270 процент ытла тултарнă. Уйрăмăн илсен, А. Макаров тракторист хăйĕн подсменщикĕпе Н. Прокопьевпа 450 гектар сухалас вырăнне 1194 гектар сухаланă, Т. Ильинапа, М. Волкова трактористкăсем хăйсен сменинче тумалли çулталăкри плана кашниех 300 процента яхăн тултарнă.

Комбайнер Н. Михайлов та ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Вăл комбайнпа 133 гектар тырă вырса пуçтарчĕ.

Маттур ĕçлеççĕ 4-мĕш номерлĕ бригадăри трактористсемпе трактористкăсем. Вĕсем кашниех «Отличный тракторист» значока илнĕ.

Ку бригадари трактористсемпе трактористкăсем мĕнпур ĕçе пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ. Пахалăх уйрăмах палăрса тăрать. «Победа» тата «Малый Цивиль» колхозсен уйхирĕсенче кăçал кĕрхи тырăсем те, çурхи тырăсем те ăнса пулчĕç. Колхозниксемпе пĕрле трактористсемпе трактористкăсем те вăйлă тырпула хăварт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Ялхуçалăх çулĕ вĕçленнĕ тĕле вĕсем тракторпа ĕçлемелли çулталăкри плана 400 процент таран тултарма пулаççĕ.

Е. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Шкула çÿремен ачасем çук

Октябрьскоe ялĕнчи 7 çул вĕренмелли шкул (директорĕ К. Вишневский юлташ) çĕнĕ вĕренÿ çулне шкулта экзаменсем пĕтсенех хатĕрлеме тытăннă. Çавна пула шкул вĕренÿ çулĕ пуçланиччен вĕренÿре кирлĕ хатĕрсемпе учебниксене пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерчĕ. Партăсемпе доскасене юсаса, сăрласа хучĕç.

Вĕренекенсем валли вĕри апат организациелеме колхозсем кирлĕ таран çăнăх, çу тата ытти продуктсем уйăрса хунă. Вĕренекенсем шкула пурте тенĕ пекех çÿреççĕ, сăлтавсăр шкула çÿремесĕр юлакансем çук.

Ф. МЕДЯКОВ.

Пĕчĕк фельетон

Çумăр, çумăр айăплă...

Çумăрсем тĕрлĕ пулаççĕ. Пĕрисем—чи кирлĕ вăхăтра килеççĕ те çĕр питне ăшшăн ачашласа çуса каяççĕ. Ун пек чухне çумăрĕ иртсе кайсанах çутă хĕвелĕ те ăшшăн пăхса кулса тăнă пек туйăнать. Теприсем вара кĕтмен çĕртен, кирлĕ мар тапхăртах, витререн сапнă пек чашлаттарса иртсе каяççĕ. Кăçал Сĕнтĕрвăрри районĕнчи хăшпĕр колхозсене пур тĕрлĕ çумăрсем те пачах йăлăхтарса çитерчĕç. «Искра» колхоз председателĕ Н. Ефимов юлташ «çумăр» тенĕ сăмаха илтсен сехĕрленсех ÿкет. Пÿртрен хăй те тухмасть, колхозниксене те тухма сĕнмест вара.

—Пĕлĕчĕсем, пĕлĕчĕсем епле!.. Пĕр тинĕс ятарласах пирĕн колхоз çине çĕкленсе килнĕ пуль,—тесе тарăхать вырăн çинче выртнă чухне Ефимов юлташ.

Аяхă тăрансан, Ефимов бригадирсем патне каять.

— Шуршăлсем выраççĕ, унта çумăр çуман пулмалла,—тет вăл куçĕсене сăтăркаласа.

— Тырă вырма тухмалла, шуршăлсем выраççĕ, — команда парать вăл. Уйхире 10—11 сехет тĕлне колхозниксем тухаççĕ.

Хĕвел анман. «Искра» колхозăн хирĕнче никам та çук. Анчах Ефимовшăн райçĕрĕç пайне сводка пама «никĕс» пур.

— Эпĕ, Ефимов, председатель... Халех... Ĕç хĕрсех пырать,—тет вăл телефон трубкине вĕрсе.—Лартăр пĕр 15—20 гектар, виçнĕ хыççăн юсăпăр...

Çав вăхăтра таçта аслати авăтать. Мăнтарăн Ефимов, çумăра курас мар тесе, куçĕсене хупласа пукан çине лаштах ларать.

— Ох, ку çумăрсем, тĕп тăваççĕ вĕсем пире,—тесе тарăхать председатель.

Пулаççĕ çав çумăрсем! «Искра» колхозшăн пушшех расна вĕсем. «Искра» уттисем çĕрчĕç, тырра та майĕпе выраççĕ. Государствăна тырă леçме кирлĕ михĕсемпе шăналăксене те хатĕрлеме пamарĕç вĕсем. Çавпа пулах çавасем хатĕр мар, жнейкăсем те...

— Михĕсем çĕлеме, жнейкăсене юсама çумăр чарать-и мĕн?—тĕлĕнĕ пирĕн вулакан.

Ефимов калаиă тăрăх, «Искра» колхозра выртса çывăрма та çумăр чăрмантарать. Ăçта михĕ çĕлеме унта!

Нерядово ялне çитнĕ комбайнера Егор Кудряшова та çумăрсем кăçал сахал мар сиен кÿнĕ. Унăн комбайнĕ çумăр айĕнче ларсах юхăннă. Тĕменле кирлĕ пайĕсем, хурçă пулсан та, ирĕлсе кайнă.

Çумăр çине «Правда», «Ядро» колхозĕнче те питĕ тарăхаççĕ. Çĕрĕн-кунĕн килте ларсах тарăхаççĕ.

Çумăр çаплах çăвас пулсан (кĕркунне вĕт, тем те пулĕ!), хăшпĕр колхоз руководителĕсенĕ çумăра тÿсме вĕрентекен мĕнле те пулин эмел кирлех.

С. МЕРЧЕНЬ.

Кашни вĕллерен 35 килограмм пыл

Йĕпреç районĕнчи «Оборона» колхозра хурт-хăмăр ĕрчетес енĕпе Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ Г. Ильин юлташ ĕçлет. Иртнĕ çул вăл кашни вĕллерен планран ирттерсе çуршар пăт пыл илнĕ. Кăçал çанталăк начар пулин те кашни çемьерен 35-шер килограмм пыл илчĕ.

А. АНИСИМОВ.

Францири суйлавсем умĕн

ĔÇ КОНФЕДЕРАЦИЙĔН КОМИТЕЧĔН ЛАРАВĔ

ПАРИЖ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 4-мĕшĕнче Ĕç конфедерацийĕн Комитечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Комитет секретарĕ Бенуа Фрашон Франци промышленноçĕ çинчен тата производство тĕлĕшпе профсоюзсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен доклад туса панă. Промышленноçăн тĕрлĕ отраслĕсенче ĕç мĕнле тăни çинчен, промышленноçри сооруженисене çĕнетес ĕçе пĕтерес тесе, темиçе пин рабочи отпуск илмесĕр ĕçлени çинчен каласа панă. Фрашон трестсен сăтăрла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă.

Политикăллă пилĕк пысăк организацин делегацине де Голль йышăнма килĕшменни çинчен Фрашон çапла каланă: «Де Голль пире çакăн çинчен астутарчĕ: пирĕн ирĕклĕх, ĕлĕкхи пекех, çирĕп мар-ха, ăна хÿтĕлеме кирлĕ-ха... пиллĕкмĕш колоннăн представителĕсем намăссăрлан-нăçемĕн намăссăрланса пыраççĕ. Оккупаци вăхăтĕнче аслă вырăнта ĕçлесе тăнă тата патриотсене асаплантарнă полицейскисене суд вĕлермелле тунăччĕ, анчах вĕсене кайран касарнă. Çакăн пирки çапла майпа ыйтма пулать: кунта пĕр çын диктатурине туса хумашкăн мĕнпур реакциллĕ çынсене пĕрлештерме тăрăшмаççĕ-и?»

Фрашон çапла каланă: Джер (Франци разведки) провинцире, йĕркене пăсас тесе, çынсене вĕлерес, провокациллĕ ĕçсем тăвас ĕçе организацилет. Фрашон хăйĕн сăмахĕнче Джерăн уголовнăй преступленисене тунăшăн полици тытса хупнă пĕр агенчĕ каланине илсе кăтартнă. Çав агент çапла каланă: Джер уйăхне 300 миллион Франк укçа илет, эпĕ Джер хушнипе преступлени турăм, çак преступление çынсене пăлхатас тесе тунă, тенĕ. «Çакăн пек ĕçсем вĕсем—провокациллĕ ĕçсем, фашистсем тăвакан ĕçсем пулса тăраççĕ», —тенĕ Фрашон.

Де Голль профсоюзсен политика тĕлĕшпе ĕçлемелле мар тесе калани çинчен Фрашон тепĕр хут çапла каланă: «Шарль де Голль—профсоюзсен çав ыйтусемпе ĕçлеме право çук, тесе калама пăхать... Çитес суйлавсенче ĕнтĕ реакципе демократи пĕр-пĕрипе кĕрешĕç».

ПАРИЖ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС) Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: де Голль Ĕçĕн пĕтĕмĕшле конфедерацийĕн генеральнăй секретарĕ Жуо янă çырăва илнĕ. Çав çырура Жуо Ĕçĕн пĕтĕмĕшле конфедерацийĕ ячĕпе, радикал-социалистсен, коммунистсен тата социалистсен партийĕсен ячĕпе тата этем прависен лиги ячĕпе правительство пуçлăхĕнчен çапла ыйтнă: суйлавсен йĕрки çинчен калаçма мана йышăнма ыйтатăп, тенĕ.

Де Голль хăйĕн çырăвĕнче Жуо ыйтнине пурнăçа кĕртме килĕшменни çинчен пĕлтернĕ. Вăл çапла каланă: «Ĕçĕн пĕтĕмĕшле конфедерацийĕ, профсоюзсен пĕрлешĕвĕ пулса тăрса, тĕрлĕ ыйтусене уйрăм илсе кăтартсан—суйлав йĕркине сÿтсе-явас тĕлĕшпе политикăллă партисен представителĕсенни пек правăсемпе усă курма пултараймасть», тенĕ.

Де Голль янă ответа сÿтсе-явмашкăн Жуо сулахайри партисен представителĕсене пухма йышăннă.

ĔÇĔН ПĔТĔМĔШЛЕ КОНФЕДЕРАЦИЙĔ ФРАНЦИРИ ПУЛАС СУЙЛАВСЕМ ÇИНЧЕН

ПАРИЖ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ĕçĕн пĕтĕмĕшле конфедерацийĕн совечĕ Францире суйлавçăсене референдумăн иккĕмĕш ыйтăвне хирĕç «ырламастпăр» тесе ответлемешкĕн чĕнсе калама решени йышăннă. Референдумăн иккĕмĕш ыйтăвĕ çакăн пек: «Государство влаçĕсем çинчен калакан закон проектне эсир ырлатăр-и?» Çавăн пек решени йышăнасси çинчен Конфедеральнăй Совет членĕсен ыйтăвĕпе ларах пайĕ сасăланă.

Конфедеральнăй Совет çавăн пекех тата Францири ĕçĕн пĕтĕмĕшле конфедерацийĕн Генеральнăй секретарĕсем пулма Леон Жуопа Бенуа Фрашона уйăрса лартма йышăннă.

ХИРĔÇ ТĂРСА КĔРЕШНĔ НАЦИ СОВЕЧĔ ЙЫШĂННА РЕЗОЛЮЦИ

ПАРИЖ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, хирĕç тăрса кĕрешнĕ наци совечĕ хăйĕн резолюцийĕнче çапла каланă: Франци правительстви государство влаçне вăхăтлăха организацилесси çинчен референдум туса ирттерме (халăхран ыйтса пĕлме) йышăнса, тăшмана хирĕç кĕрешнĕ юхăма темиçе пая уйăрса ярасшăн. Çав юхăмăн членĕсем, хирĕç тăрса кĕрешнĕ наци совечĕ хамăр çĕршыва ура çине тăратма йышăннă программăна пурнăçа кĕртес тесе, пĕр-пĕрипе нихăçанхинчен те таччăнрах çыхăнса ĕçлесшĕн. Хирĕç тăрса кĕрешнĕ наци совечĕн членĕсем тата департаментсенчи ирĕклĕх комитечĕсен делегачĕсем Франције ура çине тăратмалли генеральнăй штатсен резолюцийĕпе пĕтĕмпех килĕшеççĕ. Çав штатсем референдума хирĕç пыраççĕ. Хирĕç тăрса кĕрешнĕ Наци совечĕпе департаментсенчи ирĕклĕх комитечĕсем пĕтĕм Францире правительство референдумне хирĕç кампани сарса пырĕç. Демократи суйлавçăсем умĕнче ответлă пулса тăмалли принципсене вĕсем малашне те тытса тăрасси çинчен пĕлтереççĕ, хăйсен кампанийĕ ăнăçлă пултăр тесе, пĕтĕм вăйпа ĕçлĕç.

ГРЕЦИРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

АФИНЫ, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Афины хулинчи промышленниксем ĕнер рабочисем ыйтнипе килĕшмен, вара Афинăри пир тĕртекенсен пĕтĕмĕшле забастовки пуçланса кайнă. Акăлчансен çар учрежденийĕсемпе организацийĕсен 12.000 рабочийĕпе техникĕ тата служащийĕ 48 сехетлĕх забастовка тума йышăннă. Рабочисен ĕçукçине 75 процент ÿстерме, апат-çимĕçе лайăхлатма, страховани ĕçне пуçласа яма тата профсоюзсенче тăма ирĕк пама ыйтаççĕ. Строительнăй рабочисем 24 сехетлĕх забастовка пуçланă.

Нирейре çу çапакан тата супăнь тăвакан заводсенче ĕçлекенсен забастовки çаплах пырать. Унта сентябрĕн 5-мĕшĕнче тата хими заводĕнчи рабочисем забастовка пуçласа янă. Рабочисен пурнăçне çак çывăх кунсенчех лайăхлатма йышăнмасан, ытти нумай предприятисенчи профсоюз организацийĕсем те забастовка пуçласа яма йышăннă. Забастовка тăвакансем нумайĕшĕ экономика ыйтăвĕсемпе кăна çырлахмаççĕ, вĕсем политика ыйтăвĕсем те кăларса тăратаççĕ. Сăмахран, вĕсем политика пирки хупса лартнă çынсене каçарма ыйтаççĕ, тĕрлĕ партисен представителĕсенчен тунă правительство туса хума ыйтаççĕ.

Англире Совет Фильмĕсене пăхса тухни

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Англири посолĕ Ф. Т. Гусев Лондонри чи пысăк кинотеатрсенчен пĕринче Совет фильмĕсене кăтартнă. Фильмсене икĕ пин çын ытла пырса курнă. Вĕсен шутĕнче Англи правительствин министрĕсем, дипломати корпусĕн представителĕсем, союзниксен çарĕсемпе флочĕсен офицерĕсем пулнă, çавăн пекех тата Англи кинопромышленникĕсем, актерсем, писательсем, журналистсем нумай пулнă. «Берлин» тата «Сĕнтерÿ парачĕ» фильмсене кăтартнă. Рейхстаг çинче Совет флагĕ вĕлкĕшсе тăни курăнса кайсан, «Сĕнтерÿ парадĕнче» Жуков маршал сăмах каланине курсан, Сталин юлташа курсан, кинотеатрти халăх вăйлăн алă çупса хавасланнă. Икĕ фильмĕ те питĕ кăмăла кайнă, вĕсене кăтартни çав тери ăнăçлăн иртнĕ.

БЕЛЬГИ ХАЙНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНИ ÇУЛТАЛĂК СИТНИНЕ УЯВЛАСА ИРТТЕРНĔ

БРЮССЕЛЬ, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 2-мĕшĕпе 3-мĕшĕнче Бельги хăйне тата, уйрăмăн илсе кăтартсан, Брюссель хулине ирĕке кăларни çулталăк çитнине уявланă.

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче «Никама пăхăнманлăх фрончĕн» пуçлăхĕсем паллă мар салтакăн вилĕ тăпри çине чечек çыххи хунă. Унтан пысăк площадьре ратуша умĕнче пĕтĕм Бельгирен пухăннă партизансен парачĕ пулса иртнĕ. Оборона министрĕ Мунделер «Никама пăхăнманлăх фронтне» ялав панă. Демонстрантсем, вăрттăн ĕçленĕ темиçе министр ертсе пынипе, хула урамĕсем тăрăх утса тухнă. Бельги партизанĕсемпе пĕрле Югослави, Итали, Австри партизанĕсем, бельгиецсемпе пĕрле кĕрешнĕскерсем, пынă.

Митингра «Никама пăхăнманлăх фрончĕн» генеральнăй секретарĕ Демани мĕнпур союзниксене саламланă. Вăл СССР паттăррăн кĕрешни çинчен каланă чухне митингри çынсем Совет Союзĕнчи халăхсене хĕрÿллĕн саламланă. Унтан Англин, США-н, Совет Союзĕн, Францин тата Бельгин наци гимнĕсене каланă.

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче союзниксен çарĕсен парачĕ пулса иртнĕ. Союзниксен çарĕсем хулан тĕп урамĕсемпе утса тухнă. Парадра Англин, Канадăн, Францин, Голландин, Люксембургăн, Польшăн, Америкăн тата Бельгин мĕнпур йышши çарĕсем пулнă. Парада оборона министрĕ йышăннă. Хулана союзлă çĕршывсемпе Бельгин ялавĕсене çакса илемлетнĕ.

БЕНГАЛИ ИНДИЙĔНЧЕ ВЫÇЛĂХ ПУЛМА ПУЛТАРАТЬ

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Калькуттăри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Индин законсем кăларакан тĕп пухăвĕнчи националистсен пуçлăхĕ Банерджи доктор ĕнер Инди тĕлĕшпе ĕçлекен министра Петик-Лоуренса телеграмма янă. Унта вăл Бенгали провинцийĕнче выçлăх пулас хăрушлăха пĕтермешкĕн халех кирлĕ ĕçсем тума ыйтать. Ир пулса çитнĕ тырă тип çанталăк тăнипе тата ейÿсене пула чылай пĕтрĕ, çанталăк халĕ те çавăн пекех тăрать тата ейÿсем те пулаççĕ. Тĕп тырăсем питĕ начар пулассн курăнса тăрать. Тырă запасĕсем, вĕсене лайăх усраманнипе, чылай чакнă. «Выçă та çĕтĕк-çатăк тумлапнă çынсем Калькутта хулине пухăнаççĕ, — тесе çырать Банерджи.—Халĕ 1943 çулта пулнă пекех пулса пырать. Выçлăх ан пултăр тесен, васкаса кирлĕ ĕçсем тумалла».

Выçă çынсене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси каланă тăрăх, Бенгали провинцийĕнче 1943 çулта выçлăх пирки 1.500 пин çын вилнĕ.

НИМĔÇСЕН ЯПОНИРИ ПОСОЛĔ ПУЛНА ШТАММЕРА ТУПНИ

ПАРИЖ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: Японире Фуэсяма хулинчен 30 километрта питĕ чаплă гостиницăра союзниксен влаçĕсем Генрих Штаммера тупнă. Вăл 1943 çулхи январьтен пуçласа Японире нимĕçсен посолĕ пулса ĕçленĕ. Штаммерпа пĕрле 150 çын тытнă, вĕсем пурте Германин тата фашистла Италин дипломачĕсем пулнă.

Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру

Тĕнче вăрçи пуçлансанах вăрçă хуçалăха мĕн тери ишĕлтерсе, аркатса хăварассине, мĕн чухлĕ çын пĕтессине, мĕн чухлĕ чăлахсемпе тăлăх туратсем тăрса юлассине малтан никам та калама пултарайман. Анчах та тупăсем пеме чарăнас кун çитессине, юн юхма чарăнассине тата çынсем каллех мирлĕ ĕçе таврăнассине пурте пĕлнĕ. Пĕрлешнĕ нацисем умĕнче вăрçă вăхăтне кĕскетес, хĕвеланăçĕнче те, хĕвелтухăçĕнче те агрессорсене аркатса тăкас, çĕнĕ вăрçăн хăрушлăхне сирсе ярас тесе, мĕн кирлине пурне те тăвас задача тăнă. Çав задачăна татса парас шутпа демократиллĕ çĕршывсенчи халăхсем пĕрлешрĕç, çак таса та ырă ĕçшĕн Совет çыннисем нимĕн те шеллемерĕç. Пирĕн Тăван çĕршыври халăхсем тăшмана пурĕ пĕр аркатса тăкассине, тĕрĕс ĕç тÿрре тухассине çирĕп шанса тăнă.

Халĕ ĕнтĕ çак кун çитрĕ. 1945 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕ—Япони парăнни çинчен калакан акта алă пуснă кун—тĕнчери иккĕмĕш вăрçă пĕтнĕ кун—историе ипĕ паллă вырăна кĕрсе юлать. Сталин юлташ халăха чĕнсе каланă чухне: вăрçă пĕтрĕ, пĕтĕм тĕнчери халăхсемшĕн нумай вăхăт кĕтнĕ мир килсе çитрĕ, тесе каларĕ. Çак хыпара пур çĕрте те ăс-тăнпа тĕрĕслĕх тĕттĕмлĕхпе усалăн вăйĕсене çĕнтерни вырăнне хурса, ирĕклĕх тиранне çĕнтерни вырăнне хурса йышăнчĕç. Ют çĕршывсенчи хаçатсемпе радио Совет халăхĕн çулпуçĕн сăмахне анлăн ăнлантарса параççĕ. Кун пирки вĕсем çапла калаççĕ: паянтан пуçласа çĕнĕ тапхăр пуçланать, çак тапхăр ĕнтĕ мĕнпур халăхсене мир, ирĕклĕхпе хăрушсăрлăх кÿрсе парĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр хаçатсем тата çапла калаççĕ: тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пула Совет Союзĕ ипĕ çÿллĕ пусăма çĕкленчĕ. Çакăн пек ÿсĕмсĕр ĕлĕкхи Росси тума пултарайман. Америкăпа Англире тухакан хаçатсем, çавăн пекех тата ытти хаçатсем те Сталин юлташ: халĕ ĕнтĕ Кăнтăр Сахалинпа Курильски утравсем Совет Союзĕ аллине куçаççĕ, тесе каланине уйрăмах палăртаççĕ. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатра çырнă тăрăх, ку хыпар американецсемшĕн кĕтмен хыпар пулман. Хаçатра çирĕплетсех çапла каланă: çав территорисене СССР çумне пĕрлештерсен, Совет Союзĕпе США хушшинчи çыхăнусем вăйланса лайăхланаççĕ, американецсемпе вырăссем вара хăйсем çывăх кÿршĕсем пулнипе ăнланса илĕç.

Паллă ĕнтĕ, вырăссен чи малтанхи çар постне Сахалин утравĕ çинче 1853 çулта тунă, Японипе тунă договор тăрăх вара 1875 çулта Сахалин утравĕ пĕтĕмпех Росси аллине куçнă. Анчах та 1904—1905 çулсенчи вăрçăра японецсем, патша правительствин вайсăрлăхĕпе усă курса, утрава оккупацилени. вара Портсмутри договор тăрăх, унăн кăнтăрти пайĕ Япони аллине куçнă. 1920 çулхи май уйăхĕнче Япони милитарисчĕсем Сахалин утравĕн çурçĕрти пайне татах çар десанчĕсем антарнă та 5 çул хушши хуçаланса пурăннă. утравăн çурçанталăк пуянлăхĕсене тискеррĕн çаратнă.

Паллах, Сахалин çăхă японецсене хăйĕн пуянлăхĕсемпе çеç илĕртмен. Курильски утравсемпе пĕрле вăл çав тери паха стратегиллĕ позици пулса тăрать, вара çав позицине хăй аллинче тытса тăракан океана тухмалли çула хăй аллинче тытса тăрать. Охотски тинĕсе Лăпкă океанран уйăрса тăракан Курильски утравсем ĕлĕк-авалах пирĕн çĕршыв пулнă. Хăйсен агрессиллĕ планĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре çав утравсем мĕнле паха вырăн йышăнса тăнине шута илсе, японецсем 1875 çулта вĕсене Сахалинăн кăнтăрти пайĕпе улăштарса илнĕ. Анчах та тепĕр 30 çултан Кăнтăр Сахалин каллех японецсен аллине кĕрсе ÿкнĕ. «Япони Российăран унăн мĕнпур Инçетри Хĕвелтухăçне туртса илес задачăна лартни паллă пулнă» (Сталин).

Япони сăхăлăхĕ вăйланнăçемĕн вăйланса пынă, японецсем Читапа, Иркутска тата Красноярска та тытса илме ĕмĕтленнĕ. Анчах та истори вĕсен ĕмĕтне пĕр шеллемесĕр татса хучĕ. Халĕ ĕнтĕ парăннă Японин чиккисем пачах урăх çĕрте пулĕç, Кăнтăр Сахалинпа Курильски утравсем Совет Союзне океанпа тÿрремĕн çыхăнтармалли вырăнсем тата хамăрăн çĕршыва Япони агрессийĕнчен хÿтĕлемелли базăсем пулса тăрĕç.

Мĕнпур халăхсем нумай вăхăт кĕтнĕ мир çитрĕ.

Анчах та мир çитни, паллах, тăшмана пуринпĕн те каçармалли вăхăт çитнине, парăнтарнă тăшман çине халĕ йăвашшăн пăхма юранине пĕлтермест-ха. Ĕçе çакăн пек туса пыма нимĕнле сăлтав та çук. Нумаях пулмасть вăрçăн гитлерла преступникĕсене Пĕтĕм тĕнчери Çар Трибуналĕн Судне парасси çинчен пĕлтерни демократиллĕ çĕршывсенчи халăхсем этемлĕхе ипкек патне илсе пыма хăтланнисене пурне те çирĕп ответ тыттарма шутлани çинчен каласа паракан пĕрремĕш акт кăна пулса тăрать. Европăра фашизмăн тымарĕсене тăпăлтарса пĕтерес тесен, демократине çитĕнтерсе çирĕплетес тесен, нумай ĕçлеме тивет. Япони милитарисчĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкса пăказани пама, Япони империализмне пĕтерсе тăкма, Японире демократиллĕ строй туса хума нумай ĕçлемелле пулать.

Сакă ĕнтĕ сăмăл задача мар. Япони империалисчĕсем хăйсен халăхне агрессиллĕ, захватчикла шухăш-кăмăл парса çитĕнтернĕ. Хальхи вăрçăра, хăйсен ĕçĕ ăнăçлă пынă вăхăтра, вĕсем 7 миллион тăваткал километр территорие ярса илсе 500 миллион çынна хăйсене пăхăнтарнă. Вĕсем хăйсен аллине çав тери пысăк пуянлăх çавăрса илнĕ, çав шута тĕнчери каучук продукцийĕн 90 процентĕ тата тĕнчери тăхлан продукцийĕн 65 проценчĕ кĕрет. Вĕсем, мĕнпур Азие пăхăнтарма ĕмĕтленнĕскерсем, Япони ялавне Вашингтонри Шурă Çурт çине çĕклесе лартма шухăшланăскерсем, паллах ĕнтĕ, хăйсем парăннине часах манса каяс çук.

Японири çар пуçлăхĕсем Японин хĕçпăшаллă вăйĕсене аркатса тăкни çинчен халĕ те тулли сасăпа калама шутламаççĕ. «Пĕр сăмахсăр парăнни» тата «парăнни» сăмахсем японла куçарма май килмен сăмахĕсен шутне кĕреççĕ иккен, мĕншĕн тесен Японири хаçатсемпе радио, çавăн пекех тата правительствăри аслă çынсем те çав сăмахсемпе усă курмаççĕ. Кунсăр пуçне тата Японин премьер-министрĕ Хигасикуни каланине ĕненес пулсан, Япони Пĕрлешнĕ нацисен вăйĕсем аркатса тăкнипе пула парăнман иккен. Парăнни çинчен калакан акта алă пуснă хыççăн. сентябрĕн 5-мĕшĕнче, Япони парламенчĕн çÿлти палатин членĕсем умĕнче Хигасикуни çапла каланă: «Вăрçă пирĕн государĕн ырă кăмăлне пула кăна пĕтрĕ». «Япони императорĕ яланах пĕтĕм тĕнчипе мир туса парасси çинчен шутланă» иккен.

Совет Союзĕ тăшмана аркатса тăкас ĕçе çав тери пысăк вăй пачĕ. Пирĕн халăх çĕнтерÿ тăвас тесе хăйĕн вăйĕпе ĕçно шеллемерĕ, çавăнпа вара çĕнтерÿ турĕ. Пирĕн Тăван çĕршыв хăватлă чул сăрт пек çĕкленсе тăрать, ун çине тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсем савăнса пăхаççĕ. Турцири Ялчин евĕрлĕ журналистсем кăна, çак çĕнĕрен çуралса тухнă Геббельс йышши çынсем, миршĕн пынă кĕрешÿре Совет Союзĕ çав тери паллă вырăн йышăнса тăнине ăнланса илесшĕн мар. Ялчин Совет Союзне хирĕç блок тума чĕнет. Анчах та ялчинсем истори кустăрмине каялла çавăраймĕç. Вăрçă вăхăтĕнче демократиллĕ аслă державăсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси ÿссе çирĕпленчĕ. Ирĕклĕхе юратакан халăхсем вара çак пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлессипе мир вăхăтĕнче те çирĕплетсе пыма тăрăшаççĕ. Çирĕп те вăрăма пыракан мира çак çулпа кайсан çеç тума пулать. Вăрçă кÿрсе хăварнă сурансем çав тери пысăк, унăн юлашкийĕсем çав тери йывăр. çавăнпа та пĕр-пĕрне пулăшса пымасăр тата чи малтанах аслă державăсен пĕрлĕхĕсĕр çав суранссне тÿрлетме çук.

Нумаях та пулмасть Танжер çинчен тунă килĕшĕве пичетлесе кăларни çакна кăтартса парать: ырă шухăш-кăмăл пулсан, вăрçă хыççăнхи кирек епле ыйтусене те кăмăллăн татса пама пулать. Танжер вăл—Мароккори пысăк портпа хула, вăл Гибралтар проливĕн кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕнче ларать. Карта çине пăхсанах çак хулапа порт стратеги енчен мĕнле паллă вырăн йышăнса тăнине курма пулать. Шăпах çакăн пирки ĕнтĕ ăна 1906 çултах пĕтĕм тĕнчери зона туса хунă. Европăри государствăсен 1923 çулхи канашлăвĕнче ăна çакăн пек нейтральнăй зона вырăнне хурса йышăннă та Марокко султанĕн аллине панă. Анчах та 1923 çулхи статут 1940 çулччен çеç тытăнса тăнă. Гитлер тарçи Франко, хăйĕн хуçи пилленипе, Танжера тытса илнĕ те ăна Испани çĕршывĕ туса хунă. Паллах ĕнтĕ, вăрçă пĕтнĕ хыççăн Танжер ыйтăвĕ татах тухса тăнă. Августăн 10-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ СССР, США, Великобритани тата Франци представителĕсен конференцийĕ Танжер статутне çĕнĕрен вăя кĕртмелле, Испани çарĕсене Танжер зонинчен илсе тухмалла тесе йышăннă. Тепĕр çур çултан çĕнĕ конференци Танжерăн çĕнĕ статутне туса памалла.

Çак килĕшÿ ĕнтĕ паха ыйтăва татса панипе çеç кăтартса памасть, вăл тата фашистла режима та вăйлăн пырса çапать.

Танжер проблеми вăл—вăрçă хыççăнхи нумай проблемăсенчен пĕри çеç пулса тăрать. Пĕрлешнĕ нацисем умĕнче халĕ мира сыхласа усрас тата вăрçа пула тухса тăнă йывăрлăхсене ăнăçлăн çĕнтерес задачăсем тăраççĕ. Çывăх вăхăтсенчех Лондонра пилĕк аслă державăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем тĕл пулмалла. Çак тĕлпулура ĕнтĕ, паллах, çав маларах асăннă задачăсене татса парас тĕлĕшпе паха решенисем йышăнмалла, халăхсем çирĕп те нумай вăхăтлăх мирĕн шанчăкне çирĕплетмелле.

Г. ИВАНОВ.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Атăл леш енчи электростанцие çакăн пек работниксем кирлĕ: теплотехниксем, техник-электриксем, санитари техникĕсем, механиксем, кочегарсем, шуровщиксем, слесарьсем, электромонтерсем, плотниксем, кăмака тăвакансем, торф складĕнче ĕçлекен грузчиксем тата ытти тĕрлĕ рабочисем. Ĕç укçине килĕшсе татăлнă тăрăх тÿлеççĕ. Хваттер параççĕ, хваттере хутса тата çутатса тăраççĕ. Апатçимĕçе хăйне уйрăм списокри çынсем нормипе параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Левый берег реки Волги, Заволжская электростанция.

Атăл сумĕнчи леспромхоза ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: статистик, техник-строитель, автопарк механикĕ, шĕвек çунтарнипе ĕçлекен машинăсен шоферĕсем, вăрман хатĕрлев мастерĕсем, пăчкă хăйракансем, конюхсем, лавçăсем, тимĕрçĕсем, слесарьсем. Ĕç укçине калаçса татăлнă тăрăх тÿлеççĕ. Леспромхозăн хăйĕн ОРС пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 42.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00404 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59 п. л.